- хайлаври пулăмсене, ситуацисене тĕрĕс хак пама вĕренсе пыни;
- илемлĕх мелĕсене, сăнарлăхăн уйрăмлăхĕсемпе мелĕсене, пуплев фигурисене, стильне, вĕсене
мĕн тĕллевпе усă курнине палăртни;
- персонажсене туллин тишкерни, хак пани (мĕн пур енчен: вĕсен ĕçĕсенчен пуçласа тыткаларăшĕ, сăнĕ-пичĕ, тумĕ таранччен);
- хăйсене килĕшекен литературăна суйласа илме хăнăхни, пулăшу материалĕпе, информаци илес тĕлĕшпе ытти справочниксемпе усă курма вĕренни.

**Вĕренекенĕн пултармалла:**

**8 класс пĕтернĕ çĕре**

- класра вĕреннĕ хайлавсен тата килте вуланă кĕнекесен авторĕсене, ячĕсене, жанрĕсене, çивĕч ыйтăвĕсемпе темисене тата вĕсене хăш тапхăрта çырнине;
- çак ăнлавсене пĕтĕмĕшле пĕлмелле: илемлĕ сăнарпа сăнарлăх, темĕпа тĕп шухăшĕ, ĕç йĕркипе тытăм, рифмăпа сăвă йĕрки, жанрсем, ретсемпе ушкăнсем (эпика, лирика, лиро-

эпика, драматурги; романсем, новеллĕсем, публицистика хайлавĕсем, комедисем, трагедисем, драмăсем, приключенисемпе фантастика, питлев), литература сулăмĕсем тата пултарулăх меслечĕсем (классицизм, романтизм, реализм);
-лирика, лиро-эпика, драматурги речĕсенчи хайлавсен жанрĕсене, тытăмне, сăнарсен ушкăнĕсене, хайлаври вăхăтпа вырăна тата вĕсен çыхăнăвĕсене;
- çыравçăсен пурнăçĕпе пултарулăхĕн литературăра палăрнӗ тапхăрĕсем тата вĕсен пурăннă вăхăтри паллă ĕçĕсемпе çынсем çинчен;
- чăваш литературин аталану тапхăрĕсене, вĕсем халăх историйĕпе çыхăнса тăнине тата кашни тапхăрти çыравçăсемпе хайлавсене;
- кирек мĕнле текста та уçăмлă, йĕркеллĕ, такăнмасĕр вулама, пăхмасăр калама вĕреннĕ сăвăсемпе сыпăксене халăх умĕнче илемлĕ каласа пама;
- вуланă хайлав тĕсне, жанрне, ĕç йĕркипе тытăмне, сăнарсен ушкăнĕсене, тавлашу йĕрĕсене ăнлантарса пама;
- хайлавра хускатнă çивĕч ыйтусене тупма;
- илемлĕх мелĕсем хайлав шухăшне вăйлатнине ăнлантарса пама, çыравçă хавхине палăртма; - сăнарсемпе хайлав çинчен мĕн шухăшланине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе ĕнентерме;
- çыравçăпа унăн хайлавĕ литературăра мĕнле вырăн йышăннине ăнлантарма;
- вуланă кĕнекери ĕçсене пурнăçри тĕслĕхсемпе танлаштарса çыхănуллă калаçма, ыттисен сăмахне çирĕплетсе, тиркеме е тӳрлетсе харпăр хăй мĕн шухăшланине хӳтĕлеме;
- каламалли е çырса памалли шухăшсен планне, тезисĕсене тума;
- вĕрентекен каланине е лекцилле калаçăва кĕскен çырса пыма;
- литература темипе пĕлтерӳ, хыпар, реферат е доклад хатĕрлеме;
- хăй тĕллĕн вуланă кĕнеке, курнӗ спектакль, концерт, кинофильм, телекурăм çинчен рецензи е информаци çырма;
- пурăнакан вырăнти халăх сăмахлăхне, литература палăкĕсене, алçырăвĕсене пухма, вĕсене тирпейлесе вырнаçтарма;
- пуçламăш классенче литература ыйтăвĕсемпе калаçусем, сăвă сехечĕсем ирттерме;
- тĕрлĕ йышши сăмах кĕнекипе (словарьпе), справочникпа, энциклопедипе усă курма, вĕсенчи кирлĕ вырăнсене çырса илме, вырăсла ăнлантарнисене чăвашла куçарма.

**«Чăваш литератури» предметăн содержанийĕ:**

**8 класс**

<u>«Сăнарлă сăмах ăсталăхĕ» кӳртĕм урок.</u> И.Я.Яковлев «Чăваш халăхне» халал. Пил, пехил, халал.

<u>Халăх сăмахлăхĕ.</u> Авалхи сăмахлăх хăвачĕ. Вĕрӳ-суру чĕлхи. Ăрăмлă сăмахлăх.

<u>Авалхи çырулăх палăкĕсем</u>. Руна çырăвĕ. Виталий Станьял. «Камсем эпир...» сăвă. Асаттесен карт çырăвĕ. Атăлçи Пăлхар культури. Кул Гали. «Уçăппа Сĕлихха» поэма сыпăкĕсем. Вăтам ĕмĕрсенчи культура. Чĕрĕлекен çырулăхăн малтанхи утăмĕсем. Ермей Рожанский. II Кĕтерне патшана халаллланă мухтав сăвви. I Павăл Чулхулана пынă ятпа калама çырнă сăвă. Вăтăр Юман. «Чăтăмлăх çинчен» сăвă. Мухтав сăввисемпе сăмахĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.

<u>XVIII-XIX ĕмĕрсенчи чăваш çырулăхĕпе культури</u>. Василий Лебедев. «Пирĕн телей» сăвă. Михаил Федоров. «Арçури» поэма. Классицизм тата вăл çутлăх идеисемпе çыхăнни.

<u>XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури</u>. Михаил Акимов. «Шӳт туни» халап. «Тĕлĕнмелл!» памфлет. Питлев Тайăр Тимкки. «Шухăш» сăвă Константин Иванов «Нарспи» поэма. Çеçпĕл Мишши. Кăвар чĕрен çулăмлă сăмахĕсем. «Катаран каç килсен» сăвă. «Инçе çинçе уйра уяр» сăвă. «Тинĕсе» сăвă. «Çĕн Кун аки» сăвă. Сăвă хывăмĕсемпе сăвă виçисем.

<u>XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи чăваш литератури</u>. Илле Тукташ. «Тăван çĕр-шыв» сăвă. «Шурă кăвакарчăн» сăвă. «Шур Атăлта акăш ярăнать» сăвă. Иоаким Максимов-Кошкинский «Ачамăрсем» пьеса. Мĕтри Кипек. «Ягуар» калав. Илпек Микулайĕ. «Госпитальте» калав. Хайлав тытăмĕ. Хайлав чĕлхи.

<u>XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи чăваш литератури.</u> Юрий Сементер. «Амăшĕ ывăлĕн палăкĕпе калаçни» сăвă. Любовь Мартьянова. «Хисеп те кирлĕ» сăвă. «Юрамасть юлма»

сăвă. «Асамлă арча» сăвă. Юхма Мишши. «Шурçамка» повесть сыпăкĕсем. Сăнарлă пуплев никĕсĕ: сăнарлă чĕлхе, пуплев эрешлĕхĕ.
XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури. Елен Нарпи. «Çӳпçе тĕпĕнчи çылăх» калав Виталий Шемекеев. «Кун çути. Каç сасси, юрату...» сăвăсем Хайлавсен темипе проблеми.
Тăван литература тĕнче шайне сарăлни. Венгри чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ. Венгри поэзийĕ чăвашла янăрать Михай Ладани. «Юрă» сăвă. Йожеф Байза «Ăша çунтарса» сăвă. Шандор Вĕреш. «Хурлăхлă вальс» сăвă.
Тăванла халăх çыравçисем: тĕрĕк литературинчен. Габдулла Тукай. «Шурале» поэма сыпăкĕсем.(Тутар литературинчен). Маймбет юрри.(Казах литературинчен). Хамид Алимджан. «Россия» сăвă. (Узбек литературинчен). Расул Рза. «Баку» сăвă. (Азербайджан литературинчен).

**Тăван литература урокĕсен тематика планĕ -8 класс (68 сехет)**

| Урок йĕрки | Урок теми | Урок шучĕ |
|---|---|---|
| | **Сăнарлă сăмах ăсталăхĕ (2 сехет)** | |
| 1. | Кӳртĕм. Литература – пурнăç тĕкĕрĕ. | 1 |
| 2 | И.Яковлев. «Чăваш халăхне» халал. | 1 |
| | **Халăх сăмахлăхĕ (3 сехет)** | |
| 3 | Авлхи сăмахлăх хăвачĕ. Вĕрӳ - суру чĕлхи. | 1 |
| 4 | Ăрăмлă сăмахлăх тĕсĕсем, илемлĕх мелĕсем, пуплев фигурисем. | 1 |
| 5 | Ăрăмлă сăмахлăх. | 1 |
| | **Авалхи çырулăх палăкĕсем (2 сехет)** | |
| 6 | Руна çырăвĕ. В.Станьял "Камсем эпир". | 1 |
| 7 | Асаттесен карт çырăвĕ**.** | 1 |
| 8 | Кул Гали. «Уçăппа Сĕлихха» поэма сыпăкĕсем. | 1 |
| 9 | Атăлçи Пăлхар культурин çырулă палăкĕсем. | 1 |
| 10 | Вăтам ĕмĕрсенчи культура. Ермей Рожанский. | 1 |
| 11 | Вăтăр Юман. «Чăтăмлăх çинчен» сăвă. | 1 |
| | **18 - 19 ĕмĕсенчи чăваш çырулăхĕпе культура (8 сехет)** | |
| 12 | В.Лебедев." Пирĕн телей". | 1 |
| 13 | Михаил Федоров пурнăçĕпе пултарулăхĕ."Арçури"хайлав шăпи. | 1 |
| 14 | "Арçури"поэмăна "кадрлама" вĕренни. | 1 |
| 15 | М.Федеровăн "Арçури"хайлавăн жанр хăйне евĕрлĕхĕ. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 16 | М.Федорован "Арçури"хайлавăн виçи, сăнарлăхĕ, ытарлăх. | 1 |
| 17 | Çĕнĕ çырулăх пуçламăшĕнчи литература утăмĕсем. | 1 |
| 18 | Килти вулав. Калаçу урокĕ «Чуралăхри чĕлхене шанчăк паракансем». | 1 |
| 19 | Сочинени: «Тăван литература никĕслевçисем». | 1 |
| | **XX ĕмĕрти чăваш литератури (15 сехет)** | |
| 20 | XX ĕмĕрти чăваш литератури. Ирĕке, танлăха, çутта. | 1 |
| 21 | М.Акимов пурнăçĕпе пултарулăхĕ. "Шут туни" хайлав теми, хавхи. | 1 |
| 22 | «Тĕлĕнмелле» памфлет. Кулăш тата питлев жанрĕсем. Пафос. | 1 |
| 23 | Тайăр Тимкки. "Шухăш"сăвă. | 1 |
| 24 | Тайăр Тимкки." Чаплă вилĕм юрри"сăвă."Пурнăç çути" новелла. | 1 |
| 25 | К.Иванов пултарулăхĕн паллă енĕсем. "Силпи ялĕнче "сыпăк. | 1 |
| 26 | "Сарă хĕр", "Тарни", "Туй" сыпăксем. | 1 |
| 27 | "Хушăлкара"," Нарспи ĕçĕ", "Вăрманта", "Тăвата виле"сыпăксем. | 1 |
| 28 | Сочинени "Пуянлăхра анчах мар, ыр курасси - çыннинче". | 1 |
| 29 | Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхĕ. "Катаран каç килсен" | 1 |
| 30 | "Инçе çинçе уйра уяр" сăвă. | 1 |
| 31 | «Çĕнĕ Кун аки» сăвăри çĕкленӳлĕх пафосĕн мелĕсем. | 1 |
| 32 | «Тинĕсе» сăвăри çĕкленӳлĕх. | 1 |
| 33 | Килти вулав урокĕ. Калаçу-пĕтĕмлетӳ. | 1 |
| 34 | Сочинени. | 1 |
| | **20 ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи чăваш литератури (11 сехет)** | |
| 35 | И.Тукташ "Тăван çĕршыв". | 1 |
| 36 | И.Тукташ "Шурă кăвакарчăн", "Шур Атăлта акăш ярăнать" сăввисем. | 1 |
| 37 | И.Максимов - Кошкинский "Ачамăрсем" пьеса. | 1 |
| 38 | И.Максимов - Кошкинский "Ачамăрсем" пьеса. | 1 |
| 39 | И.Максимов - Кошкинский "Ачамăрсем" пьеса. | 1 |
| 40 | Сочинени "Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн,чысшăн" | 1 |
| 41 | А. Лазарева пултарулăхĕнче пурнăç пулăмĕсем палăрса юлни. "Пирвайхи юрату". | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 42 | М.Кипек "Ягуар" калав. | 1 |
| 43 | М.Кипек "Ягуар"калаври Ягуар сăнарĕ. | 1 |
| 44 | И.Микулайĕ "Госпитальте" калав. | 1 |
| 45 | 216 стр. 2 ыйтупа ĕçлени,калав çырни. | 1 |
| | **20 ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи чăваш литератури (7 сехет)** | |
| 46 | 20 ĕмĕрĕн 60 - 70 çулĕсем. | 1 |
| 47 | Юрий Сементер "Амăшĕ ывăлĕпе калаçни". | 1 |
| 48 | Любовь Мартьянова сăввисем. | 1 |
| 49 | "Мĕн вăл телей" диспут урокĕ. | 1 |
| 50 | Юхма Мишши "Шур çамка" повесть. | 1 |
| 51 | Юхма Мишши "Шур çамка" повесть. | 1 |
| 52 | Кашкăр çинчен ăслав çырни. | 1 |
| | **21 ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури (7 сехет)** | |
| 53 | 2000 - 2015 çулсем. | 1 |
| 54 | Елен Нарпи "Çӳпçе" калав. | 1 |
| 55 | Елен Нарпи "Çӳпçе" калав. | 1 |
| 56 | Виталий Шемекеев. Хыватăп эпĕ юрăсем. | 1 |
| 57 | Виталий Шемекеев. Хыватăп эпĕ юрăсем. | 1 |
| 58 | Хайлавсен темипе проблеми. | 1 |
| 59 | Килти вулав. Л.Сачкова "Чĕкеçĕм, чĕкеç…" | 1 |
| | **Тăван литература тĕнче шайне сарăлни (3 сехет)** | |
| 60 | Михай Ладани "Юрă". | 1 |
| 61 | Йожеф Байза "Ăша çунтарса" сăвă. | 1 |
| 62 | Шандор Вереш "хурлăхлă вальс" сăвă. | 1 |
| | **Тăванла халăх çыравçисем (6 сехет)** | |
| 63 | Тутар литературинчен. Габдула Тукай "Шурале" поэма. | 1 |
| 64 | Казах литературинчен. Майбет юрри. | 1 |
| 65 | Узбек литературинчен. Хамид Алимджан. «Россия» сăвă. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 66 | Азербайджан литературинчен. Расул Рза "Баку" сăвă. | 1 |
| 67 | Тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| 68 | Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. | 1 |

## Ăнлантарни (9 класс)

Ĕç программине çак документсене тĕпе хурса тунă:
- **стандарт:** Государственный образовательный стандарт основного общего образования (приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от 17.12.2010 г. № 1897);
- **программа**: Тăван литература. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9-мĕш класĕсем валли | Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви; Н.Г.Иванова, Е.А.Майков хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2015.
-**программа**: Основная образовательная программа основного общего образования МБОУ «Персирланская ООШ»;
-**положения** о рабочих программахМБОУ «Персирланская ООШ»;

9-мĕш класри темăсенчен пĕрисем литература ӳсĕмĕн уйрăм тапхăрĕсене сăнласа параççĕ, теприсем - уйрăм çыравçă пултарулăхне тĕпчесе-тишкерсе вĕренмеллисем.

Тĕп вырăнта писательсемпе поэтсен, драматургсен чи паллăрах хайлавĕсем.

Тăван халăхăн ăс-хакăл, кăмăл-сипет пуянлăхĕ çине таянса воспитани ĕçне йĕркелемелле, унăн ĕмĕрхи илемлĕх ăнкарăвне ăса хывтармалла, ачасен шухăшлавне тарăнлатса пымалла.

9 класра жанр уйрăмлăхне тата хронологипе историе, халăх, общество пурнăçне тĕпе хурса вĕрентмелле. çыравçă биографийĕпе пултарулăхне тивĕçлĕ истори лару-тăрăвĕпе çыхăнтармалла. Ку пусăмри ачасене вулама пысăкрах хайлавсен сыпăкĕсене панă.
**Чăваш литератури предмечĕ умне çакăн пек ĕçсем тухса тăраççĕ :**
**Вĕрентӳ тĕллевĕсем:**
-вулавпа вĕренӳ урлă илемлĕх ăнкарăвне, тĕрĕслĕх туйăмне аталантарасси, илемлĕ сăнарпа сăнарлăх пĕлĕвне туйма, хаклама хăнăхтарасси, çыхăнуллă шухăшлава тарăнлатса пырасси,
-чăваш халăх сăмахлăхĕпе çыруллă сăмахлăх хайлавĕсен чи паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарасси,
-хайлавсенче пурнăç пулăмĕсем мĕнле палăрнине хаклама хăнăхтарасси, - ачасене ӳнерсен тата сăмах ӳнерĕн пулăмĕсене тĕрĕс ăнланма, ăша хывма вĕрентесси,
-пуплев-хутшăну культурине аталантарасси,
**Вĕрентӳ предмечĕн задачисем:**
-илемлĕ хайлавпа паллаштарнă май ачасен кăмăл-туйăмне аталантармалла, халăх этикипе халăх педагогики çине таянса вĕсен ăс-тăнĕнчи сăпайлăха, çураçулăха упраса хăварmалла,
-ачасене вулама, вуланине ăнланма, сăнарсене хак пама, жанрсене, литература теорийĕн ансат ыйтăвĕсене пĕлме, вĕсем пурнăçа мĕнлерех çутатнине чухлама хăнăхтарса çитермелле,
-илемлĕ хайлавăн тишкерĕвĕпе çыхăннă ăнлавсемпе паллаштармалла: хайлав теми, литература геройĕ, унăн характерĕ (ĕçĕсем, хăйне мĕнле тытни, сăн-сăпачĕ, пуплевĕ, шухăшĕ-кăмăлĕ), автор, характеристика, илемлĕ пайрăмсем, сюжет (хайлаври ĕç-пуç, сăнланнă çынсем, пейзаж, интерьер), пуплеве илемлетекен мелсем, пафос (хавха), прозăллă тата сăвăллă пуплев,
- тĕрлĕ предметсен çыхăнăвне пĕтĕмлетме май парасси,
-ачасен кăмăл-сипетне халăх педагогикипе эстетики, традицийĕсемпе философийĕ урлă аталантарасси,

-илемлĕ сăнарлăха туйма, хаклама хăнăхтарасси, çыхăнуллă шухăшлава тарăнлатса пырасси.

**Вĕрентӳ предмечĕн вырăнĕ:**

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти 9 класс ачисем тĕрлĕ шайлă пĕлӳллĕ. Чăваш литературипе сехет шучĕ базислă плана пăхăнса тăрать. Сехетсен шучĕ - 51 сехет. 1-мĕшпе 2-мĕш чĕрĕкре эрнере -1 сехет; 3-мĕшпе4-мĕш чĕрĕкре – эрнере 2 сехет.

**Вĕренӳ пособийĕ:**

Т 13 Тăван литература: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 9-мĕш класс валли / В.П. Станьял, Е.А. Майков, О.А. Вишнева, Г.Л. Никифоров çырса-пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2020. – 335 с. - ISBN 978-5-7670-2919-8

**Чăваш литературине вĕреннин результачĕсем**

**Харкамлăх (личностные) результачĕсем:**

- ачасенче чăвашлăх туйăмĕсене аталантарни;
- чăн-чăн гражданин пулма вĕренни;
- хайлава вуласа демократилĕх тата çынлăх туйăмĕсем йĕркеленни;
- тăван ен культурине, йăли-йĕркине, тĕнне пĕлме пуçлани, Раççейри ытти халăх культурипе тата тĕнĕпе паллашни;
- халăха юратма тата ытти халăх çыннисене хисеплеме вĕренни;
- Раççейри тĕрлĕ халăх мораль нормине пĕлсе вĕсене хисеплесе пурăнма вĕреннни;
- çемьене, çемьери пахалăха, çут çанталăка хисеплеме, юратма вĕренни;
- сывлăхлă пурнăç йĕрки кирлине палăртма, хăйсен тата ыттисен сывлăхне упрама вĕренни;
- хальхи пурнăçра хăйсене мĕнле тытма май пуррине пĕлтерни, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма вĕренни;
- вĕреннин усси пурнăçра кирлине ĕнентерни;
- эстетика туйăмĕсене тата чун-кăмăла аталантарни;

**Пур предмета та вĕренме кирлĕ (метапредметные) результатсем:**

- вĕренӳри тĕллевсене, задачăсене ăнланма май парать; пултарулăх (творчество) ĕçĕсене пурнăçлама вĕрентни;
- вĕренӳре планлас, хакламалли ĕçсене тĕрĕс пурнăçлама хистет, тĕллевсене пурнăçа кĕртнĕ чух ăнăçлă çула суйласа илме пулăшни;
- вĕренӳри ăнăçупа ăнăçусăрлăх сăлтавĕсене ăнланма май парать, тĕрĕс çул çине тăратни;
- логикăллă танлаштарăва, тишкерĕве, пĕтĕмлетĕве алла илме тата илемлĕ, наукăллă тата ытти литературăри сăлтавпа следстви хушшинчи çыхăнăва курма вĕрентни;
- урăх халăх çыннисемпе пĕрлĕхри ĕçсен тĕллевĕсене палăртма пултарма, рольсене уйăрма, хире-хирĕçле тĕрĕслеме, хутшăнакан çынсен тата хăвăн ĕçӳсене кирлĕ пек хаклама, конфликтлă ситуацисене татса пама, партнер поведенин уйрăмлăхне хисеплесе пăхма хистени;
- предметри тата ытти предметсен хушшинчи базăллă ăнланусене уçăмлатма пулăшни.

**Предмета вĕреннин (предметные) результачĕсем:**

- литература халăх тата тĕнче культурин пулăмĕ пулнине туйтарни;
- халăхăн ăс-хакăлпа шухăш-кăмăл интересĕсене тата йăли-йĕркине сыхласа хăварма, малалла
тăсма пулăшни;
- вырăс литературипе чăваш литературин пĕрпеклĕх пуянлăхĕсене çыхăнтарни;
- вулав кашни çынна аталантарнине тата системăллă вулав кирлине туйтарни;
- ачасен тĕнчекурăмне аталантарни, Раççей историйĕпе тĕнче культурине пĕлтерни, малтанхи
ăс-хакăлпа шухăш-кăмăл интересĕсене йĕркелени;
- ырра усалран уйăрса илме вĕрентни;
- вуланин тĕллевне ăнланса илме пулăшни;
- тĕрлĕ вулава усă курни те текстăн содержанине ăнланса илме пулăшни;
- тĕрĕс хак пама пултарни ыйтăва сӳтсе явма, хăйсен хуравне çирĕплетме хăнăхтарни, геройсене

кăмăл-сипет енчен тĕрĕс хак партарни;
- калаçу тата вулав компетентне йĕркелесе пыни;
- ачасенчи пĕлӳлĕх шайне, ăс-хакăлпа шухăш-кăмăл интересĕсене, творчествăлла ĕçлеме пултарассине аталантарни;
- тĕрĕс ыйту лартса тĕрĕс хурав пама вĕрентни; вулакан хайлавсенче сăлтавпа следстви хушшинчи çыхăнăва палăртни;
- этикет нормисене пăхăнса калаçма вĕрентни;
- монологлă калаçăва аталантарни;
- диалога кĕме, ыттисене итлеме вĕрентни;
- хăйсен шухăшне аргументлама, урăх шухăша йышăнма, урăх халăх культурине ăнланма хистени;
- илемлĕ хайлавсене наукăлла е ытти популярлă хайлавсенчен уйăрса илме пултарни;
- илемлĕ хайлав темине, тĕп шухăшне палăртни, текста кирлĕ шайра тишкерни: чĕлхе енчен те, литература теорийĕ енчен те;
- кашни ача хайлава ăнланма вĕренни, çав хайлав патне кашнин хăйĕн туйăмĕ çурални;
- хайлаври пулăмсене, ситуацисене тĕрĕс хак пама вĕренсе пыни;
- илемлĕх мелĕсене, сăнарлăхăн уйрăмлăхĕсемпе мелĕсене, пуплев фигурисене, стильне, вĕсене
мĕн тĕллевпе усă курнине палăртни;
- персонажсене туллин тишкерни, хак пани (мĕн пур енчен: вĕсен ĕçĕсенчен пуçласа тыткаларăшĕ, сăнĕ-пичĕ, тумĕ таранчченех);
- хăйсене килĕшекен литературăна суйласа илме хăнăхни, пулăшу материалĕпе, информаци илес тĕлĕшпе ытти справочниксемпе усă курма вĕренни.

**Вĕренекенĕн пултармалла:**

**9 класс пĕтернĕ çĕре**

- илемлĕ литература, ăсталăхпа политика, публицистикăпа критика хайлавĕсене тĕрĕс, çăмăл, уçăмлă вулама;
- çыравçă çырса кăтартнине куç умне ӳкерчĕклĕн кăларса тăратма, ун çинчен сăнарлă каласа пама;
- класра е килте вуланă хайлавсене вырăн-вырăнăн, туллин е пĕтĕмĕшле кĕскен сюжетласа каласа е çырса пама;
- хайлавсен ретне, тĕсне, жанрне уйăрма, уйрăм хайлавăн шухăшпа илемлĕх хăй евĕрлĕхне палăртма;
- вĕреннĕ хайлав тăрăх план тума, сăнарсене тата сăнарсен ушкăнĕсене тишкерсе сочинени хатĕрлеме;
- хайлав çинчен хăй мĕн шухăшланине çыхăнуллă каласа е çырса пама;
- хайлаври тĕп е хушма темăсемпе çивĕч ыйтусене уйăрма, вĕрентекен панă ыйтусем е план тăрăх ырă е усал сăнарсене, пулăмсемпе ĕçсене танлаштарса хаклама, вĕсене уçса пама;
- автор шухăшĕ (позицийĕ) тата хайлав пафосĕпе идейи сăнарсемпе геройсем урлă мĕнле уçăлса пынине кăтартма;
- ĕç йĕрки, хайлав тата сăнарсен тытăмĕ, хирĕçӳ, сăнарлă чĕлхе, илемлĕх пайрăмĕсем (детальсем) хайлав шухăшĕпе илемне мĕнле ӳстернине ăнлантарма, тĕслĕхсемпе çирĕплетме; - литература ыйтăвĕпе пĕчĕк доклад, хыпар, реферат тата «Тантăш» хаçатпа «Çил çунат» журнал вали статья е тĕрленчĕк çырма;
- килте вуланă кĕнекене, курнă фильма, спектакле е телекурăма хакласа аннотаци, кĕске рецензи, статья çырма, харпăр хăй шухăшне тĕслĕхсемпе ĕнентерсе çирĕплетме;
- вĕренӳ кĕнекисемпе хрестоматисенчи ăнлантарусемпе, шкул валли кăларнă справочниксемпе, словарьсемпе усă курма;
- класра е килте вуланă хайлавсен тексчĕсене, вĕсенчи темăсемпе тĕп шухăшсене, сăнарсене, ĕçсен йĕркине, хирĕç тăрăва (конфликта);
- хайлавсен тытăмне, авторăн пултарулăх меслетне, илемлĕх мелĕсене, чĕлхен ытарлă çаврăнăшĕсене, ăсталăх хăй евĕрлĕхне; - чăваш литературин аталану йĕркине, тапхăрĕсене;

- кашни тапхӑрти паллӑ ҫыравҫӑсемпе вӗсен хайлавӗсене; - реализм меслечӗн тӗп паллисене, жанрсен ҫыхӑнӑвне;
- литература хайлавӗсен жанрӗсене;
- литература сӑмах ӑсталӑхӗ пулнине, вӑл пурнӑҫа типласа, историн пӗр-пӗр тапхӑрӗн паллӑрах енӗсене вӑйлатса кӑтартнине.

**«Чӑваш литератури» предметӑн содержанийӗ:**

**9 класс**

«Литература тата вӑл ҫыннӑн чун-чӗмне витӗм кӳнин пӗлтерӗшӗ » кӳртӗм урок.

Халӑхӑн сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен хайлавӗсем. Ӑрӑмлӑ сӑмахлӑх тӗслӗхӗсем. Кӗлӗсемпе сӑвапсем. Кил-йыш кӗллисем. Ӑрӑмлӑ чӗлхе. Балладӑсем – сюжетлӑ юрӑсем. Мифла балладӑсем. Кун-ҫул балладисем. *Баллада. Литературӑри халӑх сӑмахлӑхӗ.*

Авалхи ҫырулӑх палӑкӗсем. Пирӗн эрӑчченхи тапхӑртан пуҫласа XVIII ӗмӗр таран. Авалхи тӗрӗк халӑхӗсен культури. Несӗлсен ҫыруллӑ палӑкӗсем. Мӗтри Юман. «Паттӑр пулнӑ авалсем». *Авалхи тӗрӗк ҫырулӑхӗпе Руна ҫырӑвӗсем.* Атӑлҫи Пӑлхар культури. Ахмед ибн Фадлан. «Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхне ҫитсе курни». Палас Ахун Юсупӗ. «Хӑтлӑ пӗлӳ» *поэма сыпӑкӗсем. Авалхи тӗрӗксен эпика хайлавӗсем – халӑхӑн сюжетлӑ эпосӗн ҫӑл куҫӗсем.* Чӑвашсен вӑтам ӗмӗрсенчи культури. Чӑваш Хвети. «Чӑрӑш тӑрринче куккук автать» сӑвӑ. «Атя, инке...» сӑвӑ. Урхас Якурӗ. «Атте панӑ хора лаша» сӑвӑ. *Очерк жанрӗ аталанни.*

XVIII- XIX ӗмӗрсенчи чӑваш литератури. Никита Бичурин. «Байкал» *очерк сыпӑкӗсем.* Спиридон Михайлов-Янтуш. «Юнка» *сӑвӑ.* «Хӗрринче выртасшӑн мар» шӳт. «Сунарҫӑн пуҫ пулнӑ-и?» *питлев анекдочӗ.* «Чее кушак» *калав.* Николай Ашмарин. «Качи ҫӑви» *калав. Сентиментализм. Классицизм.*

XX ӗмӗрӗн пӗрремӗш ҫурринчи чӑваш литератури. 1900-1920 ҫулсем. Николай Шелепи. «Раҫҫей» *сӑвӑ.* «Ҫӗлен» *сӑвӑ.* Федор Павлов. «Судра» *комеди.* 1920-1930 ҫулсем. Иван Ивник. «Сывлӑм йӗрӗ юлчӗ ҫырура...» *сӑвӑ.* «Юрӑҫсем» *сӑвӑ.* Ефрем Еллиев. «Чӗн тилхепе» *калав. Сӑввӑн тӗп интонацийӗсем. Поэтпа лирика геройӗн туйӑмӗсем.* 1940-1950 ҫулсем. Митта Ваҫлейӗ. «Ҫӗр-шывӑм, ҫӗр-шывӑм, мӗн кирлӗ сана?..» *сӑвӑ..* «Анатри юрӑ» *сӑвӑ.* «Тӑван чӗлхем! Таса хӗлхем...» *сӑвӑ.* «Тав сана» *сӑвӑ.* «Тайӑр» *ярӑмран.* Александр Алка. «Июнӗн 22-мӗшӗ» *сӑвӑ.* «Бранденбург хапхи умӗнче» *сӑвӑ.* Петӗр Хусанкай. «Натали кӗпе тӗрлет». *«Аптраман тавраш» сӑвӑлла роман сыпӑкӗсем. Лирика тата лиро-эпика хайлавӗсен жанр уйрӑмлӑхӗсем.*

XX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринчи чӑваш литератури**.** Юрий Скворцов. «Хӗрлӗ мӑкӑнь» *повесть сыпӑкӗсем.* Леонид Агаков. «Юманлӑхра ҫапла пулнӑ» *повесть сыпӑкӗсем.* 1980-1990 ҫулсем. Ухсай Яккӑвӗ. «Атте-анне» *поэма сыпӑкӗсем.* Владимир Степанов. «Юрату хӑвачӗ» *фантастикӑллӑ калав. Детективлӑ, мистикӑлла тата фантастикӑллӑ хайлавсем.*

XXI ӗмӗрти чӑваш литератури. Анатолий Хмыт. «Сарӑ чечек – уйрӑлу палли» *калав.* Валери Туркай. «Ку эпӗ – Валери Туркай!» *сӑвӑ.* «Мӗн чухлӗ ырӑ ҫын ҫак ҫӗр ҫинче!..» *сӑвӑ.* «Тупӑнать вӑл, ырӑ ҫын, ырӑ ҫын валли...» *сӑвӑ.* «Айӑпа кӗрсен – йышӑн айӑпна... » *сӑвӑ.* «Йӗркеллӗ ҫынсем – йӗркеллӗ ялан...» *сӑвӑ.* Марина Карягина. Палиндромсем. Монопалиндромсем. *Хайлаври персонаж ушкӑнӗсен тытӑмӗ.*

Тӑван литература тӗнче шайне сарӑлни. Жан де Лафонтен. «Хула йӗке хӳрипе хир йӗке хӳри» *юптару.* Франсуа-Огуст Рене де Шатобриан. «Вӑрман» *сӑвӑ. Хальхи вӑхӑтри лирика хайлавӗсен вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ.*

Тӑванла халӑх ҫыравҫисем: тӗрӗк литературинчен. Габдулла Тукай (тутар литературинчен). «Кама ӗненмллн?» *сӑвӑ.* «Ах, калем!» *сӑвӑ.* Аалы Токомбаев (кӑркӑс литературинчен). «Тӑван ҫӗр-шыв телейӗ» *сӑвӑ. Хурӑнташ халӑх литератури жанрӗсен хӑйне евӗрлӗхӗ.*

**Тӑван литература урокӗсен тематика планӗ -9 класс (51 сехет)**

| Урок | Урок теми | Урок |
|---|---|---|
| | | |

| йĕрки | | шучĕ |
|---|---|---|
| | **Литература тата вăл çыннăн чун-чĕмне витĕм кӳни (1 сехет)** | |
| 1. | Кӳртĕм. Литература тата вăл çыннăн чун-чĕмне витĕм кӳни. | 1 |
| | **Авлхи карт çырулĕ тата халăх сăмахлăхĕ (3 сехет)** | |
| 2 | Ăрăмлă сăмахлăх тĕслĕхĕсем. Кĕлĕсемпе сăвапсем. Сăмахлăхри илемлĕх мелĕсем: пуплев фигурисем. | 1 |
| 3 | Ăрăмлă чĕлхе асамлăхĕ. Ăрăмлă чĕлхен жанрĕсемпе паллисем. | 1 |
| 4 | Балладăсем – сюжетлă юрăсем.мифла балладăсем. Кун-çул балладисем. | 1 |
| | **Авалхи çырулăх палăкĕсем (7 сехет)** | |
| 5 | Авалхи тĕрĕк халăхĕсен культури. Кӳл Текĕне мухтакан Пысăк çыру. | 1 |
| 6 | Мĕтри Юман. «Паттăр пулнă авалсем». | 1 |
| 7 | <u>Атăлçи Пăлхар культури.</u><br><br>Ахмед ибн Фадлан. «Атăлçи Пăлхар патшалăхне çитсе курни» | 1 |
| 8 | Палас Ахун Юсупĕ. «Хăтлă пĕлӳ» поэма сыпăкĕсем. | 1 |
| 9 | Сочинени «Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ – чăваш несĕлсен çер-шывĕ». | 1 |
| 10 | <u>Чăвашсен вăтам ĕмĕрсенчи культури.</u><br><br>Чăваш Хвети. «Чăрăш тăрринче кукку авăтать», «Атя, инке…» сăввисем. | 1 |
| 11 | Урхас Якурĕ. «Атте панă хора лаша» сăвă. Тĕп шухăшĕ, уйрăмлăхĕсем. | 1 |
| | **18-19-мĕш ĕмĕрсенчи чăваш литератури ( 7 сехет)** | |
| 12 | 18-мĕш ĕмĕрти литература паллисем. | 1 |
| 13 | Никита Бичурин пурнăçĕпе пултарулăхĕ. «Байкал» очерк. Жанрĕ, сюжет йĕрĕ, тĕсĕ. | 1 |
| 14 | 19-мĕш ĕмĕрти литература аталанăвĕ. | 1 |
| 15 | Спиридон Михайлов-Янтушăн «Юнка», «Хĕрринче выртасшăн мар», «Сунарçăн пуç пулнă-и?», «Чее кушак». | 1 |
| 16 | Н.И.Ашмарин – паллă тĕпчевçĕ, чĕлхеçĕ, çыравçă. «Качи çăви» хайлаври сăнарсем, шухăшсем, ĕçсем. | 1 |
| 17 | Килти вулав урокĕ.С.Чунтеров «Пирĕн йăх» хайлав жанрĕ. | 1 |
| 18 | Сочинени «Ламран лама куçать этем ăс-хакăлĕ». | 1 |
| | **20-мĕш ĕмĕрĕн 1-мĕш çурринчи чăваш сăмахлăхĕ ( 13 сехет)** | |

| | | |
|---|---|---|
| 19 | 1900-1920 ç.ç. чăваш сăмахлăхĕ. Николай Шелепин «Раççей», «Çĕлен» сăввисем. | 1 |
| 20 | Ф.Павлов – яăваш драматургийĕн никĕсне хываканĕ. «Судра» комедин тĕп шухăшĕ, сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕ. | 1 |
| 21 | 20-30 ç.ç. чăваш сăмахлăхĕ. | 1 |
| 22 | Килти вулав. «Шехрулла» калав. | 1 |
| 23 | Иван Ивник. «Сывлăм йĕрĕ юлчĕ çырура…», «Юрăçсем» сăвăсен виçи, тропсем. | 1 |
| 24 | Ефрем Еллиев- паллă вĕрентӳçĕ, прозăпа драматурги ăсти. «Чăн тилхепе» хайлав, сюжет йĕрĕ, тематики, проблематики. | 1 |
| 25 | Килти вулав урокĕ. 20-30-мĕш çулсенче пурнăçпа илем, юрату, туслăх темисем. | 1 |
| 26 | Сочинени. 20-30-мĕш çулсенче пурнăçпа вилĕм проблемине хускатнă çыравçăсем. | 1 |
| 27 | 40-50 ç.ç. литература аталанăвĕ. Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулен тĕп тапхăрĕсем. | 1 |
| 28 | «Çĕр-шывăм, çĕр-шывăм, мĕн кирлĕ сана?», «Тав сана!», «Анатри юрă», «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем» сăвă виçи, илемлĕх мелĕсем. | 1 |
| 29 | Александр Алка пурнăçĕпе пултарулăхĕ. «Июнĕн 22-мĕшĕ» сăвă теми, проблеми. Автор шухăш-кăмăлĕпе лирика геройĕн шухăш-кăмăлĕ пĕр килни. | 1 |
| 30 | «Бранденбург хапхи умĕнче» сăвă теми, проблеми, тытăмĕ. | 1 |
| 31 | П.Хусанкай пултарулăхĕн хăйне еверлĕхĕ. «Натали кĕпе тĕрлет» сыпăк жанрĕ, темипе проблеми. | 1 |
| | **20 ĕмĕрĕн 2-мĕш çурринчи чăваш литератури (12 сехет)** | |
| 32 | 60-70-мĕш ç.ç.чăваш литератури. | 1 |
| 33 | Юрий Скворцов пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. Çыравçăн чăваш литературинчи вырăнĕ. | 1 |
| 34 | «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлав жанрĕ, тĕсĕ, темипе проблеми. | 1 |
| 35 | «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлаври сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕ. Сюжечĕ, композицийĕ. | 1 |
| 36 | Килти вулав урокĕ. Калаçу урокĕ. «Пĕрремĕш юратувăл – телей, савăнăç». | 1 |
| 37 | Сочинени. «Çамрăк ĕмĕр иккĕ килмест, ăна тивĕçлĕ пурăнса | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | ирттермелле». | |
| 38 | Л.Агаков. «Юманлăхра çапла пулнă» хайлав жанрĕ. | 1 |
| 39 | «Юманлăхра çапла пулнă» хайлаври сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕ. | 1 |
| 40 | 80-90 ç.ç. литература аталанăвĕ. Яков Ухсай. | 1 |
| 41 | «Атте-анне» поэма сыпăкĕсем. Проблеми, теми, сăвă виçи, пуплев фигурисем. | 1 |
| 42 | Владимир Степанов- фантастика, мистика жанрĕпе çыракан прозаик. | 1 |
| 43 | «Юрату хăвачĕ» хайлав жанрĕ, тĕсĕ, тытăмĕ, конфликт. | 1 |
| | **21 ĕмĕрти чăваш литератури (4 сехет)** | |
| 44 | 21-мĕш ĕмĕрти чăваш литератури. | 1 |
| 45 | Анатолий Хмыт. «Сарă чечек – уйрăлу палли» хайлав. | 1 |
| 46 | Валери Туркай – хальхи самана поэчĕ. Сăввисен тематики, пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсем. | 1 |
| 47 | Марина Карягина- тухатуллă поэзи ăсти. Сăввисен тематики, пĕрпеклĕхĕсемпе уйлăмлăхĕсем. | 1 |
| | **Тăван литература тĕнче шайне сарăлни (1 сехет)** | |
| 48 | Жан де Лафонтен «Хула йĕке хӳрипе хир йĕке хӳри» юптару. Франсуа-Огуст Рене де Шатобриан «Вăрман» | 1 |
| | **Тăванла халăх çыравçисем (3 сехет)** | |
| 49 | Габдулла Тукай «Кама ĕненмелле?», «Ах, калем!» сăвăсем. Аалы Токомбаев «Тăван çĕр-шыв телейĕ» хайлав. | 1 |
| 50 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ. | 1 |
| 51 | Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. | 1 |

**Критерии оценивания устных ответов**

Общие требования к устному ответу по учебному предмету «Родная (чувашская) литература»:

– соответствие ответа формулировке темы;

– содержательность, глубина и полнота ответа; достоверность излагаемого материала; хорошее знание текста художественного произведения;

– аргументированность, логичность и композиционная стройность ответа;

– достаточный интеллектуально-культурный и научно-теоретический уровень ответа;

– умение воспринимать художественное произведение как факт искусства слова.

Знание и понимание основных закономерностей и проблем развития литературы, умение анализировать содержание и форму художественных произведений;

– грамотная, богатая, точная и выразительная речь.

***Отметка Критерии «5»***

- прочные знания и глубокое понимание текста изучаемого произведения;
- умение объяснить взаимосвязь событий, характер и поступки героев, роль художественных средств в раскрытии идейно-эстетического содержания произведения;
- умение привлекать текст для аргументации своих выводов; раскрывать связь произведения с эпохой;
- свободное владение монологической речью.

***Отметка Критерии «4»***

- прочное знание и достаточно глубокое понимание текста изучаемого произведения;
- умение объяснить взаимосвязь событий, характеры и поступки героев и роль основных художественных средств в раскрытии идейноэстетического содержания произведения;
- умение привлекать текст произведения для обоснования своих выводов;
- хорошее владение монологической литературной речью;
- допускается 1-2 неточности в ответе.

***Отметка Критерии «3»***

- знание и понимание текста изучаемого произведения, умение объяснять взаимосвязь основных средств в раскрытии идейнохудожественного содержания произведения, но недостаточное умение пользоваться этими знаниями при анализе произведения;
- допускается несколько ошибок в содержании ответа, недостаточно свободное владение монологической речью, ряд недостатков в композиции и языке ответа, несоответствие уровня чтения установленным нормам для данного класса.

***Отметка Критерии «2»***

ответ обнаруживает незнание существенных вопросов содержания произведения; неумение объяснить поведение и характеры основных героев и роль важнейших художественных средств в раскрытии идейноэстетического содержания произведения, слабое владение монологической речью и техникой чтения, бедность выразительных средств языка.

**Оценка («5», «4», «3»)** может ставиться не только за единовременный ответ (когда на проверку подготовки ученика отводится определенное время), но и за сумму ответов, данных учеником на протяжении урока (выводится поурочный балл), при условии, если в процессе урока не только заслушивались ответы учащегося, но и осуществлялась проверка его умения применять знания на практике.

**Критерии оценивания творческих работ.**

В основу оценки творческих работ (сочинение, письмо, диалог, эссе, презентация, проект) по родной (чувашской) литературе должны быть положены следующие главные критерии в пределах программы данного класса:

1) правильное понимание темы, глубина и полнота ее раскрытия, верная передача фактов, правильное объяснение событий и поведения героев, исходя из идейно-эстетического содержания произведения, доказательность 30 основных положений, привлечение материала, важного и существенного для раскрытия темы, умение делать выводы и обобщения, точность в цитатах и умение включать их в текст творческих работ;
2) соразмерность частей творческого задания, логичность связей и переходов между ними;
3) точность и богатство лексики, умение пользоваться изобразительными средствами языка.

**Отметка Критерии «5»**

- содержание работы полностью соответствует теме;
- отсутствуют фактические ошибки;

- содержание излагается последовательно;
- работа отличается богатством словаря, разнообразием используемых синтаксических конструкций, точностью словоупотребления;
- достигнуты стилевое единство и выразительность текста.

В целом в работе допускается одна-две неточности в содержании.

***Отметка Критерии «4»***

- содержание работы в основном соответствует теме (имеются незначительные отклонения от темы);
- содержание в основном достоверно, но имеются единичные фактические неточности;
- имеются незначительные нарушения последовательности в изложении мыслей;
- лексический и грамматический строй речи достаточно разнообразен;
- стиль работы отличается единством и достаточной выразительностью.

В целом в работе допускаются две-три неточности: в содержании, а также не более 3-4 речевых недочетов.

***Отметка Критерии «3»***

- в работе допущены существенные отклонения;
- работа достоверна в главном, но в ней имеются отдельные фактические неточности;
- допущены отдельные нарушения последовательности изложения;
- беден словарь и однообразны употребляемые синтаксические конструкции, встречаетсянеправильное словоупотребление;
- стиль работы не отличается единством, речь недостаточно выразительна.

В целом в работе допускается не более 4 недочетов в содержании и 5 речевых недочетов.

***Отметка Критерии «2»***

- работа не соответствует теме;
- допущено много фактических неточностей;
- нарушена последовательность мыслей во всех частях работы, отсутствует связь между ними, работа не соответствует плану;
- крайне беден словарь, работа написана короткими однотипными предложениями сослабо выраженной связью между ними, часты случаи неправильного словоупотребления;

нарушено стилевое единство текста. В целом в работе допущено 6 недочетов и до 7 речевых недочетов.